**Ĕмĕр сакки сарлака**

Проект ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать

***Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин терчĕ-асапĕ çĕршыв халăхĕн пурнăçĕпе ĕç-хĕлне тĕпрен улăштарма хистенĕ. Шупашкарта та çаплах пулнă: тăшманпа çапăçмашкăн тухса кайнă арçынсем вырăнне станоксен умне хĕрарăмсемпе вата-вĕтĕ тăнă. «Пурте – фронт валли, пурте çĕнтерӳшĕн» тĕллевпе вăй хунă ун чухне.***

# Вăрçă ахрăмĕ

## Тăшмана Шупашкар кăсăклантарнă

Промышленноçăн, халăх хуçалăхĕн мĕн пур ĕçне тĕпрен улăштарма, çар хатĕрĕ кăлармашкăн майлаштарма тивнĕ: пысăк предприятисене кăна мар, пĕчĕккисене те эвакуаци йĕркипе анăçран куçарса килнĕ заводсене вырнаçтармашкăн тата çĕнĕ технологи линийĕсене лартмашкăн анлăлатнă, реконструкциленĕ.

Чăваш автономийĕн тĕп хули çар хатĕрĕсем туса кăларма хатĕрленнипе тăшман кăсăкланмасăр тăма пултарайман паллах. Унсăр пуçне Шупашкар çыннисем çапăçу хирĕнче аманнă пин-пин салтака сыватса фронта таврăнма пулăшмашкăн сумлă тӳпе хывнă: вĕсем валли кунти хăтлă та меллĕ çуртсенче госпитальсем уçнă, хĕр-упраç меди-



ЧР истори архивĕн сăн ӳкерчĕкĕ

● *Шупашкарти госпитальте.*

цина сестри пулса тăнă, шкулта вĕренекенсем ерçӳллĕ самант тупса сиплевçĕсене пулăшма васканă, йывăр аманнă салтаксене тăванĕсем патне ямашкăн çыру çырса панă, вĕсен тунсăхне юрă-кĕвĕпе сирнĕ.

Сăмах май, йывăр сурана пула вилнисене Б.Хмельницкий урамĕнчи çăвари тăванла масарта пытарнă. Хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ыттисене телейлĕ тăвассишĕн, мирлĕ тӳпе парнелессишĕн кĕрешнĕ паттăр хӳтĕлевçĕсене пуç тайса тав тумашкăн халăх унта паян та йышлă çӳрет, вĕсен вил тăприйĕ патне илсе пыракан сукмака курăкпа витĕнме памасть.

## Тӳпере – фашистсен самолечĕ

Фронт линийĕнчен 550 километр ытла уйăрса тăнă май, Шупашкарсемшĕн хаяр çапăçусен кĕрлевĕ илтĕнмен пулсан та пысăк инкек хăй пирки аса илтерсех тăнă: пурнăç йывăрланнă, хуйхăллă çыру илекенсен йышĕ ӳссе пынă.

Хула çийĕн анăçалла тăтăшах совет самолечĕсем вĕçсе иртнĕ. Вĕсене çынсем, уйрăмах ача-пăча, кĕрлевĕнченех уйăрса илме пултарнă, ăнăçу сунса «тимĕр кайăксем» çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте куçран çухаличченех ăсатнă.

…1941 çулхи чӳк уйăхĕн тăваттăмĕш кунне каç сĕмĕ çапнă. Çанталăк ăмăррине пăхмасăр урамра ăшă пулнă. Тӳпере сасартăк самолетăн кĕрлевĕ илтĕнсе кайнă. Вăл пирĕнни маррине туйса илнĕ шăпăрлансем килĕсене самантрах кĕрсе тарнă.

Вăрçă пуçланнă çул тăваттăмĕш класра вĕреннĕ К.Бакузов хăйĕн аса илĕвĕнче палăртнă тăрăх, хваттере хашкаса чупса кĕнĕскер, сĕтел хушшине апатланма ларнă çывăх çыннисене: «Нимĕç самолечĕ вĕçсе килет», – теме ĕлкĕреймен, вăйлă шăвшав хăлхана хупланă, темскер кĕрĕслетсе сирпĕннĕ. Пĕтĕм çурт кисреннĕн туйăннă: электричество лампи енчен енне сулкаланнă, шкапри чашăк-тирĕк шанкăртатма, чӳрече кантăкĕ чăнкăртатма тытăннă. Кĕçех çутă сӳннĕ. Пуринчен малтан «тăна» кĕнĕ ашшĕпе аслă пиччĕшĕ урама сиксе тухнă, кирпĕч тата эрех завочĕсен çывăхĕнчи ту çамкинче çутă пульăсен икĕ черечĕ шăхăрса иртнине асăрханă.

Тепĕр кунне шăллĕпе иккĕшĕ тул çутăлнă-çутăлманах бомба ӳкнĕ вырăна кайса пăхнă. Умра 2-3 метр тарăнăш çаврака шăтăка курсан çӳçĕ вирелле тăнă арçын ачан: тăшман самолечĕ çывхариччен юлташĕпе шăпах çак вырăнта пулнă вĕсем. 10-15 çеккунт тытăнса тăнă тăк…

## Икĕ çын пурнăçĕ татăлнă

СССР Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ 1942 çулхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче кăларнă хушу тăрăх, çĕршыври асăннă ведомствăна пăхăнса тăракан архив органĕсен фашистсен Совет Союзĕн территорийĕнчи тискерлĕхне çирĕплетекен документлă материал пухмалла пулнă. Асăннă хушăвăн копине илсенех 1942 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССРĕн шалти ĕçсен наркомĕн пулăшуçи П.Ермолаев тата НКВДн архив пайĕн пуçлăхĕ Р.Семенов Шупашкар хула ĕçтăвкомĕн председателĕнчен нимĕç самолечĕ 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче бомба пăрахни çинчен хатĕрленĕ акт копине ыйтнă. Шупашкар хулин пурăнмалли çурт-йĕр управленийĕ 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 5-мĕшĕнче йĕркеленĕ документ копине çийĕнчех кайса панă /сăмах май, асăннă акт халĕ республикăри патшалăх архивĕн «Чăваш Республикин архивсен ĕçĕн патшалăх комитечĕ» фондĕнче упранать/. Ĕçлĕ хута Шупашкар хулин пурăнмалли çурт-йĕр управленийĕн пуçлăхĕ А.Гаврилов, ĕçсен йĕркелӳçи М. Бочкарева, В.Данилов техник-инспектор, Шелухин /ятне кăтартман. – **Авт.**/ техник алă пусса çирĕплетнĕ.

Унта палăртнă тăрăх, тăшман самолечĕ 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче сывлăшран тапăннине пула хула хуçалăхĕ пысăк инкек тӳснĕ:

1. Пĕр бомба халăх сучĕ вырнаçнă Плеханов урамĕнчи 40-мĕш çурт çине ӳксе унăн çуррине тĕппипех аркатнă, сулахай енчине хавшатнă. Ăна йĕркене кĕртмешкĕн çурта никĕс таранах сӳтме тивет. Çĕнетсе улăштарассипе çыхăннă малтанласа палăртнă тăкак 150 пин тенкĕпе танлашмалла. 18 çын суранланнă.

Сывлăш хумĕпе Плеханов урамĕнчи Игумновсем пурăнакан 45-мĕш çуртăн чӳречисем, çенĕкĕ арканнă. Ăна юсамашкăн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1400 тенкĕпе танлашмалла. 1 çын аманнă – йывăр сурана пула Игумнов вилнĕ.

Сывлăш хумĕпе Ворошилов урамĕнчи 6-мĕш çуртăн чӳречисем, кăмака арканнă. Вĕсене юсамашкăн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1600 тенкĕпе танлашмалла.

2. Пĕр бомба Ленин урамĕнчи 33 тата 35-мĕш çуртсен хушшине ӳкнĕ, чӳречисемпе çенĕкĕсене аркатнă. Вĕсене юсамашкăн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1700 тенкĕпе танлашмалла. 35-мĕш çуртра 1 çын йывăр аманнă – Керзинсен 3 çулти хĕрĕ сурана пула вилнĕ.

3. Пĕр бомба Ленин урамĕнчи 25-мĕш çурт çывăхне ӳкнĕ. Мунча арканнă. Ăна çĕнетмешкĕн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1800 тенкĕпе танлашмалла.

4. Пĕр бомба Завод урамĕнчи 18-мĕш çуртăн пахчине ӳкнĕ. Нимĕн те арканман.

5. Пĕр бомба Завод урамĕнче ӳкнĕ. Сарнă çул арканнă. Ăна юсамашкăн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1000 тенкĕпе танлашмалла.

6. Пĕр бомба Чебоксарка шывне ӳкнĕ. Нимĕн те арканман.

7. Пĕр бомба Ленин урамĕнчи 35-мĕш çурт çывăхне ӳкнĕ. Чӳречесем тата пӳлĕмри хăма арканнă. Вĕсене юсамашкăн каякан малтанласа палăртнă тăкак 1200 тенкĕпе танлашмалла.

8. 12 бомба Атăла ӳкнĕ.

9. 3 бомба Атăлăн сулахай çыранĕнчи Сосновка поселокне ӳкнĕ.

Пĕтĕмпе 22 бомба пăрахса хăварнине шута илнĕ. Аркатупа çухату тăкакĕ 160 пин тенкĕпе танлашать.

## Хĕрача ячĕпе – Асăну плити

Республика ертӳлĕхĕ инкек пулнă хыççăн тепĕр кунах, чӳк уйăхĕн 5-мĕшĕнче, Шупашкар, Канаш, Çĕрпӳ, Улатăр, Çĕмĕрле хулисенчи, Куславкка поселокĕнчи, Тĕрлемес станцийĕнчи тата Атăл урлă хывнă кĕпертен 50 километртан çывăхрах вырнаçнă Куçлавкка районĕсенчи ялсенчи çуртсенче çутăна хупламалли çинчен йышăну кăларнă.

Шĕкĕр Турра, тăшман самолечĕ Шупашкара тапăннă тĕслĕх урăх пулман.

Арканнă çурта çĕнĕрен çĕклеме, чӳречене е çенĕке сывлăх пулсан юсама пулать. Анчах та фронтран чылай аякри Шупашкарта фашистсен тискерлĕхне пула кун-çулĕ 3 çултах татăлнă Галинăна чĕртсе тăратма çук. Аслă ăрури Игумнов автансăр яла вăхăтсăр ăсанни те унăн çывăх çыннисене кăна мар, пире, чĕрĕ те сывăскерсене, шухăшлаттармаллах. Манăçа кăлармалла мар вĕсене.

Галина – Мускав хĕрĕ, ашшĕ-амăшĕпе Шупашкара эвакуаци йĕркипе килнĕ.

«Аппана Шупашкарта чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче пытарнă. Тăшман бомбин ванчăкĕ анне куçĕ умĕнчех пĕчĕкскерĕн чĕрине тăраннă. Çывăх çыннăмăра çак инкек ĕмĕр тăршшĕпех канăç памарĕ…» – çырнă Галинăн каярахпа çуралнă йăмăкĕ Елена Андрусева социаллă сетьре.

Шел, 77 çул каялла Шупашкарта пулса иртнĕ инкек çинчен хула çамрăкĕсем кăна мар, аслă ăрурисем те пĕлсех каймаççĕ.

Хулари 57-мĕш шкулти «Набат» ышрав клубĕн членĕсем чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче Шупашкар кӳлмекĕн хĕррине çитсе кунтан инçех мар вырăнта чĕри тапма чарăннă пĕр айăпсăр хĕрачана асăнса пуç таясси йăлана кĕнĕ. Клуб ертӳçи Евгений Шумилов çак тĕлте Асăну палли вырнаçтарас ыйтăва хула влаçĕ умĕнче пĕрре кăна мар çĕкленĕ. Хуравĕ çырлахтарман паллах: кӳлмек çыранĕ – кану вырăнĕ. Асăну паллине Çĕнтерӳ паркĕнче лартмашкăн сĕннĕ кăна.

…Хастар арсем çине тăнипе Шупашкар кӳлмекĕ хĕрринче, троллейбус чарăнăвĕ тата полици посчĕ çывăхĕнче, хĕрача ячĕпе Асăну плити çĕкленĕ.

«1941 çулхи чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче фашист самолечĕ Шупашкара бомба пăрахнипе çак вырăнта виçĕ çулти хĕрача Галина Керзина вилнĕ.

Мемориал плитине Чăваш Республикинчи «Веда» ышрав отрячĕ» общество организацийĕ «Хамăр дивизи» социаллă проекта пурнăçласа 2017 çулта хатĕрленĕ. Асăннă проекта ĕçе кĕртмешкĕн грант шучĕпе РФ Президенчĕн 2016 çулхи ака уйăхĕн 5-мĕшĕнчи хушăвĕпе тата Нацин «VEDA» ыр кăмăллăх фончĕ ирттернĕ конкурспа килĕшӳллĕн уйăрнă патшалăх пулăшăвĕн укçипе усă курнă», – тесе çырнă ун çине.




Василий КУЗЬМИН сăн ӳкерчĕкĕ

● *Бомба ӳкнĕрен вилнĕ ачана асра тытса.*

**Кăларăма Валентина СМИРНОВĂПА пĕрле Лидия ШУМОВА, Надежда КЕДРОВА хатĕрленĕ.**